27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 29 ШАМАТКУН 148(6643) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, САН шывĕ урлă каçса, противник оборонине татса кĕнĕ те, танксен соединенийĕсемпе утлă çарсем тата пехота аякран кайса çавăрса илмелли маневр тунине пула, ПЕРЕМЫШЛЬ хулипе крепоçне тата ЯРОСЛАВ хулине — çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пункчĕсене, КРАКОВ патне пымалли çулсене хӳтĕлесе тăраканскерсене, турса илнĕ.

ПЕРЕМЫШЛЬ тата ЯРОСЛАВ хулисене турса илессишĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-полковникĕн КАТУКОВĂН, РЫБАЛКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ГЕТМАНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн АНИКУШКИНĂН, ДРЕМОВ генерал-майорăн, ЧУГУНКОВ полковникăн, АРХИПОВ полковникăн, ТУТУШКИН полковникăн танкисчĕсем; БАРАНОВ генерал-лейтенантăн, МАМСУРОВ генерал-майорăн, БОРЩЕВ полковникăн, ВАШУРИН полковникăн утлă çарĕсем; ПУХОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-майорăн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-майорăн, ПАНКРАТОВ генерал-майорăн, КРАСНОВ генерал-майорăн, ЧЕРВОНИЙ генерал-майорăн, ВОЛКОВИЧ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МЯСОЕДОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАМЕНСКИЙĔН, ОГАНЕСЯН полковникăн, ЛЕБЕДЕВИЧ полковникăн, ОСТАНЬКОВИЧ полковникăн, МАЗИН полковникăн, ОРЕХОВ полковникăн, ХУСИД полковникăн, ЦЕСАРЬ полковникăн, РУКОСУЕВ полковникăн, ЖАГАЛ полковникăн, ПОПОВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн САМОХИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ГАЛУНОВĂН, ДАВИДКОВ полковникăн, ГЕРАСИМОВ полковникăн, ГЕЙБО полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИЙĔН, КАМЕНЧУК полковникăн, ХАРЧЕВИН полковникăн, БАРАШ полковникăн, КОРДЮКОВ полковникăн, РЕВЯКИН полковникăн, БЕРЗИН полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВĂН, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн ОХРИМЕНКĂН, БОРИСОВ полковникăн, ПАРДО полковникăн, ЗАХАРОВ подполковникăн, ЛОЖИНЦЕВ подполковникăн, РУДЕНКО подполковникăн, ТУНИК подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПЕРЕМЫШЛЬ тата ЯРОСЛАВ хулисене турса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ПЕРЕМЫШЛЬСКИ» тата «ЯРОСЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 28-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăран çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПЕРЕМЫШЛЬ тата ЯРОСЛАВ хулисене турса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПЕРЕМЫШЛЬ тата ЯРОСЛАВ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 28-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, аякран çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, паян, июлĕн 28-мĕшĕнче, Белоруссири область центрне БРЕСТ (Брест-Литовск) хулипе крепоçне — вăрçă тĕлĕшпе питех те паха чугун çул узелне тата нимĕçсен Варшава енчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă районне турса илнĕ.

БРЕСТ хулине турса илессишĕн пынă çапăçусенче ПОПОВ генерал-полковникăн, БЕЛОВ генерал-полковникăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантăн, РЯБЫШЕВ генерал-лейтенантăн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн, БАТИЦКИЙ генерал-майорăн, КОРЧИКОВ генерал-майорăн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорăн, ТИМОФЕЕВ генерал-майорăн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорăн, КИРСАНОВ генерал-майорăн, РЕВУНЕНКОВ генерал-майорăн, ШАЦКОВ полковникăн, СЫЧЕВ полковникăн, МАЛЬКОВ полковникăн, КУЧЕНЕВ полковникăн, МОШАЛКОВ полковникăн, МУЛОВ полковникăн, НЕСТЕРЕНКО полковникăн çарĕсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ТУТАРИНОВ генерал-майорăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн Кубань çыннисенчен тăракан утлă çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЕГОРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИЙĔН, артиллери генерал-майорĕн ДМИТРИЕВĂН, СЕРГЕЕВ полковникăн, КИРИЛЛОВ полковникăн, ПУХОВ полковникăн, ПАПП полковникăн, ВАХРОМЕЕВ полковникăн, КОЛОКОЛОВ полковникăн, БАРМОТИН полковникăн, ПОНОМАРЕНКО полковникăн, КОРЧАГИН полковникăн, ПЕТРОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРИВОШЕИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВОЕЙКОВĂН, КУЛИКОВ полковникăн, ПАРФЕНОВ подполковникăн, СИМОНОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ГЕОРГИЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВОЛКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн СЧЕТЧИКОВĂН, ТАТАНАШВИЛИ полковникăн, РЫБАКОВ полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ПРОШЛЯКОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЖИРОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВИТВИНИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИОФФЕ, АФАНАСЬЕВ полковникăн, ПАВШУК полковникăн, ВОРОНОВ полковникăн, ДОБЫЧИН полковникăн, АНТОНОВ полковникăн саперĕсем; ПЛОТКИН полковникăн, ЧЕХОВ полковникăн, КАЛТУХОВ полковникăн, СТУПАЧЕНКО полковникăн, КАЛЕЧИЦ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, БРЕСТ хулине турса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «БРЕСТСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 28-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, БРЕСТ хулине турса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, БРЕСТ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 28-мĕшĕ.

КАШНИ КОЛХОЗĂН АЧА ЯСЛИ Е ПЛОЩАДКИ ПУЛТĂР

Колхозсен уйкирĕсенче тулăх та вăйлă тырпул пулса çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртес задача тăрать. Колхозлă ял чи ответлă та хĕрӳллĕ тапхăра кĕчĕ. Фронт ыйтăвне ăнăçлăн шурнăçлас, çав вăхăтрах колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпул валеçсе парас тесен, пĕтĕм тырпула хăвăрт тата пĕр пĕрчĕ юлмиччен пухса кĕртмелле.

«Тырпула пухса кĕртесси—пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕç, вăл кĕтме юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн — туянтăн, кая юлса пухса кĕртрĕн—çухатрăн», — тесе вĕрентет Сталин юлташ. Тырра вăхăтра тата тăкаксăр пухса илес тесен, малтанах ĕç вăйне пĕлсе вырнаçтармалла, машинăсемпе транспорт инвентарьне вăхăтра хатĕрлени, ĕç пĕлсе организаилени кирлĕ.

Халĕ, вăрçă кунĕсенче, колхозри ĕçе ытларах хĕрарăмсем тăваççĕ. Тырпула пухса кĕртес, государствăна тырпул тата ытти продуктсем тăратас ыйтăва хĕрарăмсем татса параççĕ. Партипе совет организацийĕсен, çĕрĕç, сывлăха сыхлас тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен задачи вăл — колхозницăсене ăнăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем туса парасси. Чăн малтанах, кашни колхозрах ача яслине е площадкине организацилемелле. Чăваш АССР Совнаркомĕ кашни колхозрах, унта ачасен шучĕ 15-рен кая мар пулсан, ача ясли е площадки уçма хушрĕ. Ача яслине организацилени ача амăшĕсене тырпул пухса пĕнĕ вăхăтра ĕçе активлăн хутшăнма май парать, колхозри ĕç вăйĕн хисепне ӳстерет.

Шăхасан районĕнчи Малыштăн «Молодой колхозник» колхозра 6 бригада. Ясли организациленĕ хыççăн кунта кашни бригадăрах çĕнĕрен 10 çын ĕçе хутшăнать. Колхоз çакна шута илнĕ, вăл продуктсем, савăт-сапасем хатĕрлесе хунă.

Улатăр, Куваккино, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсенче те яслисем чылай уçнă. Çак районсем иртнĕ çул тырпул пухас ĕçре пулнă çитменлĕхсене кăçал тăвас мар тесе тăрăшаççĕ.

Анчах та Вăрмар, Тăвай, Муркаш, Калинино, Октябрьски, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче яслисемпе площадкăсем тăвас ĕçĕпе начар ĕçлеççĕ-ха. Кунта халĕ яслисем ĕçлеме тытăнман. Хăшпĕр колхозсен, ясовечĕсен тата районсен руководителĕсем ясли организацилени колхозри ĕç тухăçлăхне ӳстерес çĕрте питех те пысăк выран йышăнса тăнине ăнлама пĕлмеççĕ, тĕрлĕ сăлтавсем тупса яслисем организацилемесĕр тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ тырпул пухас ответлă ĕçе чăрмав кӳме пултарать. Колхозсенче вăхăтлăх яслисемпе площадкăсем тăвасси — пысăк та паха ĕç. Вăл колхозшăн кăна мар, государствăшăн та калама çук кирлĕ выран йышăнать. Вăл тырпул пухнă вăхăтра темиçе çын ача амăшĕсене ĕçе явăçтарма май парать.

Тырпул пухас ĕçсем пуçланчĕç. Елчĕк, Шăхасан, Калинино тата ытти районсенче те ырăш вырма тытăнчĕç. Çавăнпа та яслисемпе площадкăсем уçас тĕлĕшпе васкамалла. Вăрçă вăхăтне пăхмасăрах, республикăри чылай колхозсене государство чылай тырпул парса пулăшрĕ. Вăл тырра пăв малтан ача яслисемпе площадкисем тата пĕрлешӳллĕ столовăйсем валли уйăрмалла.

Ачасене пăхас ĕç — ответлă ĕç. Вăл ĕç мĕн тери пысăк та паха иккенне кашни ача амăшĕ лайăх ăнланать. Çавăнпа та вăл ĕçе пултаруллă çынсене шанса памалла. Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник» колхозра çу тĕлĕшпе тĕрĕс тунă. Вĕсем ача яслине ертсе пыма ялти учительницăна П. Сергеева тата медсестрана М. Макарова юлташсене уйăрнă. Вĕсене пулăшса пыма шкулта аслă классенче вĕренекен виçĕ хĕрачана хушнă. Анчах та хăшпĕр колхозсенче ачасене пăхма уя ĕçлеме тухайман ватă хĕрарăмсене уйăрма шутлаççĕ. Паллах, çакă вăл тĕрĕс мар. Яслири ачасене пăхма сывлăх енчен те, пĕлӳ енчен те юрăхлă çынсене уйăрмалла. Яслире тĕрлĕ чирсем ан сарăлччăр тесе, кашни ачан сывлăхне тĕрĕслесе илмелле, медицина работникĕсен ялан контроллесе тăмалла, медработниксем кашни сехетрех яслири е площадкăри ачасене пулăшу пама та хатĕр пулмалла.

Колхозри яслисемпе площадкăсене ертсе пырас ответлăха пĕтĕмпех çĕрĕç, сывлăха сыхлас тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăнти органсем çине хунă. Вĕсем ачасен сывлăхĕшĕн тата ача-пăча учрежденийĕсем йĕркеллĕ ĕçленишĕн колхозниксен умĕнче кăна мар, государство умĕнче те ответлă пулса тăраççĕ. Анчах та çакă ĕнтĕ партипе совет организацийĕсем çинчен ответлăха сирмест. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем ача-пăча учрежденийĕсене куллен ертсе, пулăшса пымалла, вĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесех тăмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПСКОВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, Ленинград облаçĕнчи район центрне ПАЛКИНО ялне турса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ГАВРИЛОВА, КРАСНОДУДОВО, БУНДИНО, ДОКТЫ, ТРУЛЕВА, БРИЗЖАВА, БАЛТИНАВА ятлă пысăк ялсем.

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, июлĕн 27-мĕшĕнче нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пункчĕсене — ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулине тата РЕЗЕКНЕ (Режица) хулине штурмласа турса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — БУХАЛАВА, КАПРАНИ, БЕРАГАЛЕ, БĂРАВАЯ, КАЛУПЕ, ЛИКСНАС ятлă пысăк ялсем тата МЕЖВИДИ, ИЛЗЕНИ, МАЛТА, АПСАНЫ, АГЛОНА, АРДАВА, ВАГАНТИ, ВИШТИ, КУДРАЙНЕ, НИЦГАЛЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнă хыççăн, июлĕн 27-мĕшĕнче ШАУЛЯЙ (Шавли) хулипе пысăк чугун çул узелне турса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ИОГАНИШКЕЛИ, ПОКРОЙ, КЛЕВАНЫ, ЛИГУМАЙ, КИПШТЫ, ШАПЛАГИ, КАЙРЕ, РАДЗИВИЛИШКИ, ЛЯУДЫШКИ, БЕЙСАГОЛА, ПОЦУНЕЛИ ятлă пысăк ялсем тата ШАДОВ, ЛИНКАЙЦИ, РАДЗИВИЛИШКИ, ШИЛЯНЫ, МЕКЕ, БЕЙСАГОЛА, СКЕМИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн, июлĕн 27-мĕшĕнче промышленноçăн пысăк центрне БЕЛОСТОК хулине — чугун çулсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ хăватлă районне штурмласа турса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — халăх пурăнакан ВАСИЛЬКОВО, ВЫСОКИ, СТАРОСЕЛЬЦЫ, СЛОБОДА, СОЛЬНИКИ, ЖУКИ ятлă пысăк пунктсем.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла турса илнĕ. Вăл шутра — РАСНА, КУСТИН, МОТЫКАЛЫ, ЗАБЛОЦЕ, ДОБРЫНЬ ДУЖЕ, ДЕРЕЧАНКА, КОЛЧИН, ЗАЧОПКИ, РОКИТНО, ЛИПНИЦА ятлă пысăк ялсем тата ЛЫЩИЦИ, КАМЕНКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЛЮБЛИН хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, МЕНДЗЫЖЕЦ, ЖЕЛЕХУВ, ГАРВОЛИН хулисене турса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ШАНЯВЫ, ДОМБЕ, ОСИНЫ, ЦЕХОМИН, СОБОЛЕВ, ОПОЛЕ ятлă пысăк ялсем тата ШАНЯВЫ, ДОЛЬНЕ, КШИВДА, ОКШЕЯ, ЛЕОПОЛЬДУВ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем тăшманпа СЕДЛЕЦ хули урамĕсенче çапăçма тытăннă.

ЗАМОСТЬЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, ТУРОБИН, ЯНУВ, КРАСНИК хулисене турса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КОСАЖЕВ, ГЕЛЧЕВ, ТАРНАВКА, ДРАГАНЫ, ТОКАРЫ, ГОДЗИШУВ, ВЕЖХОВИСКА ятлă пысăк ялсем.

ЛЮБАЧЕВ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Сан шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдармсене аслăлатасшăн çапăçса, малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, РУДНИК, ЛЕЖАЙСК, СОКОЛУВ, ПШЕВУРСК, РАДЫМНО хулисене турса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра НИСКО, ЕЖОВЕ, КАМЕНЬ, ВОЛЯ ЗАРЧИЦКА, НЕНАДУВКА, МЕДЫНЯ, РАКШАВА, КАНЬЧУГА, ПРУХНИК-МЯСТО, РОКЕТНИЦА, ЖУРАВИЦА ятлă пысăк ялсем тата НИСКО, РУДНИК, ЛЕНТОВНЯ, САЖИНА, ЛЕЖАЙСК, ГРОДЗИСКО, ПШНВУРСК, ПЕЛКИНЕ, РАДЫМНО ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, июлĕн 27-мĕшĕнче пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин стратеги тĕлĕшпе питех те кирлĕ тĕреклетнĕ пунктне — Украинăн хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен паха центрĕ пулса тăракан область хулине—ЛЬВОВА тата пысăк чугун çул узелне, нимĕçсен Карпат тăвĕсем умĕнчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — Украйнăн область центрне СТАНИСЛАВ хулине турса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — Львов облаçĕнчи район центрĕсем ВИННИКИ хулипе БОБРКА хули, Станислав облаçĕнчи район центрĕсем — БУКАЧЕВЦЫ, ЛИСЕЦ, БОГОРОДЧАНЫ, КАЛУШ хулисем тата ВОЛОШИЗНА, ОТШЕЛИСКА НОВАЯ, ЛЕЩИН, ДУЛИБЫ, ЗАГУРЕЧКО, ВИШНЮВ, ЧЕРНЮВ, ПОХУВКА, ГОРОХОЛИНА, СТАРУНЯ, ПАСЕЧНА ятлă пысăк ялсем тата ЖУРАВНО-НОВОСЕЛЬЦЕ, ЧЕРНЮВ, БУКАЧЕВЦЫ, КАЛУШ, ПАСЕЧНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 231 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 42 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТИЛЬЗИТ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПĂННИ

Июлĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци йышлăн вĕçсе кайса Тильзит чугун çул узелне (Хĕвелтухăç Прусси) тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула вуншар тĕлте пушар тухнă. Вагонсемпе платформăсем, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсем çуннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе нимĕçсен пилĕк çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Пушарсенче взрывсем пулнă. Уйрăмах вăйлă взрывсем чугун çул узелĕн кăнтăр-хĕвеланăç тата хĕвелтухăç пайĕсенче пулнă. Пушарсен çулăмне пирĕн летчиксем Тильзитран тавăрăннă чухне 200 километртан курнă.

☆ ☆ ☆

Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронт çарĕсем Даугавпилс (Двинск) хулине штурмласа турса илнĕ. Нимĕçсем ку хулана нумай вăхăт хушши хӳтĕлесе тăма хатĕрленнĕ. Вĕсем ку хула тавра траншейăсем, танксене хирĕç шăтăксем алтса тултарнă, юпасем тата темиçе рет пралук картисем лартса тухнă. Нимĕçсен командованийĕ Двинск хулине чылай пысăк вăйсем куçарса пынă, хулана пĕтĕмĕшпех çавăрса илсен те хӳтĕлеме хушнă. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем, умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапса, Двинск хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулне татнă та Хĕвеланăç Двина шывĕ çине тухнă. Тăшман хăйĕн пăсăлнă çулĕрĕсене йĕркене кĕртме хăтланнă, анчах вăл пур çĕрте те çухатусем кăна тӳснĕ. Паян ирхине пирĕн çарсем, нимĕçсен хăватлă оборонине татнă та тăшмана хыçранах хăваласа пырса, хулана вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаяр çапăçусем хыççăн Даугавпилс хулине гитлеровецсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Даугавпилс хулишĕн пынă çапăçусенче совет çарĕсем нимĕçсен виçĕ пехотнăй дивизийĕн чаçĕсене, эсэсовецсен 2 полкне тата полицейскисен пĕр полкне аркатса тăкнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление малалла вăйлатса пынă. Пирĕн танковăй соединенисем, тăшман тылĕсем тăрăх 70 километр кайса, Шауляй хулипе Рига хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне, çавăн пекех тата Тильзита каякан çулсене те татнă. Çăмăл куçса çӳрекен соединенисем хыççăн пынă совет пехоти Радзивилишки, Шаплаги, Кайре пункчĕсенчи нимĕç гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Тăшмана сывлăш çавăрма памасăр, совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем Шауляй хулине виçĕ енчен вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. 2.000 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Шауляй хулинче совет çарĕсем трофейăсем—паровозсемпе вагонсем, çар склачĕсем тата хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. 400 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем çапăлах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Енер каç пулса килнĕ тĕле совет чаçĕсем, гитлеровецсене Белосток хулипе юнашар ларакан ялсенчен хĕссе кăларнă та, Белосток хулине хĕвелтухăçпе çурçĕр енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем, нимĕçсен оборонине татса, хула варринех çитсен, нимĕçсем юлашки хут хăйсен лару-тăрăвне çăлса хăварма хăтланнă, вĕсем çапăçăва хăйсен пĕр чăмăра пухнă танковăй тата пехотнăй чаçĕсене кĕртсе янă. Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче совет çарĕсем тăшмана аркатса тăкнă та тул çутăлса килнĕ тĕлелле Белосток хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех турса илнĕ. Тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă соединенийĕсен юлашкийĕсем Супрасль тата Нарев шывĕсем урлă хывнă каçăсем патĕнче капланса тулнă. Совет летчикĕсем каялла чакакан нимĕçсене татти-сыпписĕр штурмлаççĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче тăшманăн 2.500 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем Белостокра танксем, тупăсем, автомашинăсем, паровозсем тата вагонсем нумай, боеприпассен, апат-çимĕçсен тата çар пурлăхĕн пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем Львов хулине штурмласа турса илнĕ. Львов хули районĕнче çавăрса илнĕ тăшман çарĕсене аркатса тăкнă. Нимĕçсен пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă ушкăнĕсене совет чаçĕсем Львов хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата хĕвеланăçнерехри районсенче пĕтерсе пыраççĕ. Çапăçу вырăнĕсем гитлеровецсен виллисемпе, тăшман пăрахса хăварнă çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ техникăпа, хĕçпăшалпа тулса ларнă. Пĕр участокра кăна совет боецĕсем 10 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 70 тупă тытса илнĕ, 1000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн Галич хулине турса илнĕ чаçсем, çав тери хăвăрт малалла кайса, Калуш хули патне тухнă та тăшманăн çурçĕр-хĕвеланăçнелле чакмалли çулĕсене татнă. Станислав хулинчен кăнтăртарахра наступлени туса пыракан совет çарĕсен ушкăнĕ, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса, тăшман аллинче тăрса юлнă пĕртен пĕр шоссе çулне татнă. Унтан гварди чаçĕсем тăшмана çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен татăклăн пырса çапнă. Тăшман хирĕç тăпине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн çарсем Станислав хулине турса илнĕ. Тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсем паникăна ӳксе вăрмансем урлă хĕвеланăç еннелле, Карпат тăвĕсем патнелле каялла чакаççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне парасси çинчен

Ачасене коммунистла воспитани парса вĕрентес ĕçре питех те палăрмалла çитĕнӳсем тунăшăн тата обществăллă пурнăçа активлăн хутшăнса ĕçленĕшĕн Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне çаксене парас:

1. Елизавета Павловна Александровăна— Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
2. Анастасия Федоровна Арбатовăна — Ишлей районĕнчи Ишек вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
3. Любовь Андреевна Ботниковăна — Çĕмĕрле районĕнчи Турханти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
4. Степан Пудович Вишнякова — Шăхасан районĕнчи Вăрман Кипекри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
5. Лидия Николаевна Волжанинăна — Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
6. Константин Васильевич Волкова — Комсомольски районри Луцковăри пуçламĕш шкулăн заведующине.
7. Прасковья Александровна Григорьевăна — Шăхасан районĕнчи Матьшури çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
8. Ирина Дмитриевна Глуховăна — Октябрьски районри Кутемерти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
9. Людмила Григорьевна Денисовăна — Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
10. Евгения Ефимовна Доброправовăна—Улатăрти 10-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
11. Павел Егорович Егорова — Канашри педагогика училищин преподавательне.
12. Ольга Михайловна Ефименковăна — Çĕмĕрле районĕнчи Улхашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
13. Мария Всеволодовна Жезловăна — Етĕрне районĕнчи Чаканарти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
14. Василий Захарович Захарова — Куславкка районĕнчи Кунерти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
15. Ксения Григорьевна Здориченкăна— Пăрачкаври çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
16. Александра Николаевна Золотовăна— Куславкка вăтам шкулĕн учительницине.
17. Архип Васильевич Иваничева — Çĕмĕрле районĕнчи Улхашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующине.
18. Анна Ивановна Ивановăна — Куславкка районĕнчи Кунерти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
19. Николай Иванович Иванова — Сĕнтĕрвăрринчи ачасен çурчĕн директорне.
20. Юлия Алексеевна Ивановăна — Красноармейски районри Именкасси вăтам шкулĕн учительницине.
21. Петр Ильич Ильина — Муркаш районĕнчи Шуркасси пуçламĕш шкулĕн заведующине.
22. Мария Михайловна Кореньковăна — Куславкка районĕнчи Тĕрлемес вăтам шкулĕн учительницине.
23. Михаил Васильевич Крынецкие — Калинино районĕнчи Ямбах пуçламĕш шкулĕн заведующине.
24. Серафима Андреевна Лысенинăна — Çĕрпӳ вăтам шкулĕн учительницине.
25. Тимофей Степанович Малышева — Ишлей районĕнчи Анат-Кĕнерти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
26. Лукьян Захарович Маркова — Йĕпреç вăтам шкулĕн учительне.
27. Михаил Алексеевич Масленникова— Тăвай вăтам шкулĕн вĕренӳ пайĕн заведующине.
28. Агрипина Матвеевна Матвеевăна — Комсомольски районри çĕнĕ Çĕрпӳел пуçламĕш шкулĕн заведующине.
29. Серафима Степановна Матвеевăна — Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
30. Клавдия Ивановна Милорадовскаяна — Çĕмĕрлери 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
31. Данил Николаевич Николаева — Чăвашсен государство педагогика институчĕн старши преподавательне.
32. Марфа Николаевна Николаевăна — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкул ĕçĕсен Управленийĕн инспекторне.
33. Иван Никонорович Никонорова — Чурачăк районĕнчи Шупуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.

(Юлашки пулать).

Тырпул пухса кĕртес ĕç—пĕтĕм халăх ĕçĕ

Ăнса пулнă тырпула вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарар!

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Вăрнар районĕнчи колхозсемпе хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, государствăна тырпулпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарассишĕн тата тырпула ăнăçлăн пухса кĕртни çинчен, государствăна тĕрштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма чĕнсе каланине пăхса тухса, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Вăрнар районĕнчи колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен пуçарăвне ырланă.

ВКП(б) райкомĕсене Вăрнар районĕнчи колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем чĕнсе каланине колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче, трактористсен, комбайнерсен пухăвĕсенче сÿтсе-явма тата тырпула ăнăçлăн пухса кĕртни çинчен, государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парса татни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушнă.

Вăрнар районĕнчи колхозсемпе хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР-чи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Тырă вырса пуçтармалли вăхăт — ялхуçалăхĕнчи чи йывăр, чи хĕрÿллĕ те ответлă вăхăт çитрĕ. Халĕ кашни кун, кашни сехет хаклă. «Уборка — сезонра тумалли ĕç, — тесе вĕрентет пире Сталин юлташ, —вăл кĕтме юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртетĕн — тырпуллă пулатăн, кая юлатăн — çухататăн».

Халĕ, пирĕн çĕршыв Отечественнăй вăрçăн чи татăклă тапхăрне кĕнĕ чухне, кашни колхозникпе колхозница, МТС-семпе совхозсенчи тата хатĕрлев организацийĕсенчи кашни работник, Тăван çĕршыв умĕнчи пысăк ответлăха туйса, вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме тивĕçлĕ. Пур колхозсем те тырпула кĕске сроксенче тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртчĕр, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана срокчен тултарччĕр тесе ĕçлемелле пирĕн.

Вăрçă пысăк йывăрлăхсем кÿчĕ пулин те, Чăваш республикинчи колхозсен умра тăракан çак хисеплĕ задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пур майсем те çителĕклĕ. Иртнĕ çулта та уборка вăхăтĕнче йывăрлăхсем сахал мар пулнă. Çанталăк начар [illegible]

Партипе правительство «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» постановлени йышăнса, пире [illegible] ĕçлеме анлă программа пачĕç. [illegible] пĕтĕм халăх ĕçĕ тесе шутлаççĕ. Çав постановление сÿтсе-явса эпир тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, кĕрхи тырăсене вăхăтра та лайăх акса хăварассишĕн, государствăна тырпул памалли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва тухма шутларăмăр.

Эпир кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна обязательствăсем тăрăх, МТС ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплата тăрăх тырă пĕтĕмĕшпех парса татма тата Хĕрлĕ Çар фондне те тырă хывса çитерме пулатпăр; октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне — государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕçсем, аш-какайпа ытти тĕрлĕ çимĕçсем пĕтĕмĕшпех парса тататпăр. Августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕрхи тырăсене пĕтĕмĕшпех тата агротехника кăтартăвĕсене çирĕп тытса пырса акса пĕтеретпĕр.

Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, эпир сире социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр, тырпул пухса кĕртес тата кĕрхи тырăсем акас ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлани çинчен, тырпул хатĕрлемелли плана срокчен тултарни çинчен аслă Сталина пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн анлă кĕрешÿ пуçласа яма чĕнетпĕр.

[illegible]

Сывă пултăр пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр пирĕн учитель, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Канашлу хушшинче алă пуснă:

ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ **КОРОТКОВ**, райисполком председателĕ **ОСИПОВ**, МТС директорĕ **НИКОНОВ**, райçĕрпе пайĕн заведующийĕ **МАКСИМОВ**, Наркомзагăн Вăрнар районĕнчи уполномоченнăйĕ **ИГОРЕВ**, Заготзерно пунктĕн директорĕ **КЛИБЫШЕВ**, райçĕрпе пайĕн главнăй агрономĕ **ДАНИЛОВ**, МТС-ăн старши агрономĕ **ЛУКИН**, Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозăн председателĕ **ВАСЯНИН**, «Победа» колхоз председателĕ **АНДРЕЕВ**, «Самолет» колхоз председателĕ **ПЕТРОВ**, Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **ВАГАНИН**, Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **КУЗЬМИН**, «Волга» колхоз председателĕ **ИВАНОВ**, «Ландыш» колхоз председателĕ **ЕФРЕМОВ**, Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **СМИРНОВ**, Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **ТИХОНОВ**.

Вăрнар МТС-ĕ çулталăкри плана тултарнă

Вăрнар МТС-ĕ тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕçсен планне 100,1 процент тултарнă. План тăрăх 16.900 гектар сухалла малла пулнă, июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне 16.919 гектар сухалнă, 8.000 килограмм горючи перекетленĕ.

ВĂРНАР
МТС директорне НИКОНОВ юлташа, Парторганизаци секретарьне ПЛАТОНОВ юлташа

Совнаркомпа парти Обкомĕ Сирĕн МТС коллективне тракторсен çулталăкри планне ăнăçлă тултарнă ятпа салам парать. Сирĕн МТС работникĕсем тырпул пухса кĕртес, кĕраки тăвас, кĕрхи çĕр сухалас ĕçсене те çавăн пекех ялхуçалăх ... ытти ĕçсене те шанса тăратпăр.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **А. МАТВЕЕВ**.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ**.

11.100 гектар ыраш вырнă

Июлĕн 28-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем 11.100 гектар ыраш вырнă. Ыраш вырассине Елчĕк районĕ малта пырать. Унта 2.353 гектар вырнă. «Осоавиахим» колхоз (председателĕ Клементьев юлташ) ыраш вырса пĕтернĕ, халĕ ĕлкĕрекен пăрçана пухма тухнă. Чкаловски районĕнчи колхозсем 1.580 гектар, Шăхасан районĕ — 1.098 гектар, Калинино — 1.089 гектар, Комсомольски — 792 гектар, Октябрьски — 389 гектар, Вăрмар районĕ —310 гектар ыраш вырнă. Çак районри «Свобода» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) ыраш вырассине малта пырать, унта 50 процент ытла вырнă. Ыраш çапма та тытăннă. Чи лайăх тырра обязательство тăрăх государствăна параççĕ. Кÿлме вĕрентнĕ 10 вăкărпа пĕр кун хушшинче 30 центнер ыраш «Заготзерно» пунктне леççе панă.

Республикăри пур колхозсенче те ыраш вырас ĕç анлăн саралса кайрĕ.

Комбайнпа 500 гектар вырса пухма пулатăп

Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ П. М. Маркиянов чĕннине йышăнса, унпа социализмлă ăмăртăва тухатăп. Манăн обязательство: пĕр комбайнпа 500 гектар вырса пухмалла, горючи 10 процент перекетлемелле тата ĕçĕн пахалăхĕ яланах лайăх пулмалла.

М. ГРОМОВ,
Çĕрпÿ МТС-ĕн комбайнерĕ.

Пирĕн комбайнерсем те ăмăртăва хутшăнаççĕ

ЕТĔРНЕ, июлĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсем пире, колхозсен уйхирĕсенче ĕçлекенсене, çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантараççĕ. Эпир колхозсене вăйлă тырпул пухса илме пулăшассишĕн кĕрешетпĕр.

Ĕнер пирĕн МТС-ри трактористсемпе комбайнерсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта эпир СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе мĕн тумалли çинчен сÿтсе-яврăмăр. Комбайнерсемпе трактористсем чылай паха сĕнÿсем пачĕç.

Йĕпреçпе Çĕрпÿ МТС-ĕсенчи комбайнерсен Маркияновпа Громов юлташсен ăмăртăвĕ пирки асăнсан, пирĕн МТС-ри комбайнер В. И. Токсубаев юлташ та 400 гектар пухса кĕртме пулчĕ, Çĕмĕрле МТС-ĕнчи комбайнера И. И. Михайлов юлташа хăй пек ĕçлеме социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. Ытти комбайнерсем те хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

П. ПЕРЛОВИЧ,
Етĕрне МТС директорĕ.

Жнейкăпа лайăх ĕçлеççĕ

КУКЕÇ, июлĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Шурка ялсоветĕнчи колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине сÿтсе-явнă хыççăн ĕç тухăçлăхĕ нумай ÿсрĕ. Кашни колхозникех уйрăм сдельщинăпа тата ăмăртса ĕçлет. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри Е. Степанов пĕр кунта жнейкăпа 5 гектар вырнă тата кĕрепленĕ савапа 7 çын 2 гектар ытла çулнă. Ыраш вырас ĕç ытти колхозсенче те лайăх пырать.

М. НИКИТИН.

Ÿкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи Сыпайкасси ялсоветĕнчи тырпулсем мĕнле çитĕннине тĕрĕслекен комисси «Вус-кассы» колхозăн ир акнă сĕллине тĕрĕслет. Комисси составĕнче (сулахайран сылтăмалла): Смелов (ялсовет председателĕ), Шишков («Труд» колхоз председателĕ), Кожевников, Кульков юлташсем.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 26-мĕшĕнче каçхине пичетлесе каларнă пĕлтерÿре çапла калать:

Хĕвеланăç секторĕнче союзниксем пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ, çапăçусен районĕ аслăлансах пырать.

Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре тăшман, пирĕн çарсене Кан хулинчен кăнтăрхĕвелтухăçнерехри усă вырăна тухма кансĕрлес тесе, пĕтĕм вăйне хурса кĕрешет. Нимĕçсем кунти çапăçăва çĕнĕ вăйсем кĕртсе янă. Пирĕн атакăлакан чăссене тăшман хăйĕн оборона позицийĕсенчен тупăсемпе тата минометсемпе вăйлăн перет. Пĕр пунктра пирĕн çарсем тăшманăн танксем пулăшнипе тунă вăйлă контратакине сирсе пăрахнă.

Июлĕн 26-мĕшĕнче ирхине союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ФРАНЦУЗСЕН ШАЛТИ ХЕÇПАШАЛЛА ВАЙĔСЕН ÇАПĂÇУРИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: туллимар даннăйсем тăрăх, французсен шалти хирĕç тăракан вăйĕсем çак çулхи июнĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа тăшмана хирĕç çапăçнă чухне 16.500 нимĕçе вĕлернĕ, 1.650 гитлеровеца амантнă тата 500 нимĕçе тыткăна илнĕ. Французсем Бретаньре (Нормандипе юнашар выртакан провинцире) уйрăмах вăйлă çапăçаççĕ. Кунта вĕсем 3.000 нимĕçе ытла вĕлернĕ. Бретань витĕр тухакан пур чугун çулсем çинче те тенĕ пекех поездсем çÿрессине йĕркерен тухнă. Нормандире хирĕç тăракан французсен вăйĕсем нимĕçсен тылĕнче ăнăçлă кĕрешеççĕ. Хăшпĕр отрядсем фронт линийĕнчен 20 километр шалта кĕрешеççĕ. Пиренейра француз патриочĕсем чылай районсене контроллесе тăраççĕ.

ЖЕНЕВА, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарин «Трибюн де Женев» ятлă хаçачĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсем нумаях пулмасть Эн департаментĕнчи Ойонакс хулине хăйсен аллине каялла турса илме хăтланнă, вăл хулана французсен хирĕç тăракан вăйĕсем чылай пулать ĕнтĕ ирĕке кăларнă пулнă. Гитлеровецсем çав хула çине сывлăшран бомбăсем пăрахнă, унтан ăна штурмлама тытăннă. Нимĕçсен вăйĕсем французсенчен чылай йышлăрах пулнă пулин те, французсем, гитлеровецсене йывăр çухатусем кÿрсе, хула патĕнчен сирсе ывăтнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци хулинчен кăнтăртарахра 8-мĕш арми чаçĕсем 30 миля сарлакăш фронтра çĕнĕрен чылаях малалла куçнă. Ареццо хулинчен 6 миля çурçĕрхĕвелтухăçнерехре тăшман оборонин пĕрремĕш линине татнă.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем Линц хулинчи «Герман Геринг» фирмин танксем тăвакан заводне тапăннă, çавăн пекех тата Филлах (Австри) чугун çул узелĕ çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен тактикăллă авиацийĕ çапăçусен районĕнче, Çурçĕр Италире тата Югославире кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен малти чаçĕсем Флоренци хулине çитесси 16 километр та юлман ĕнтĕ.

Ареццо хулинчен çурçĕртерехре 8-мĕш арми чаçĕсем тĕллĕн-тĕллĕн çитĕнÿсем тунă. Тибр шывĕн улăхĕнче 8-мĕш армин бронетанковăй чаçĕсен патрулĕсем Сансепольккро хули патне çитесси 3 километр юлнă. Адриатика тинĕсĕ хĕрринче 8-мĕш арми чаçĕсем Остра хулине хăратса тăраççĕ. 5-мĕш армири американецсен чаçĕсем хăйсен Арно шывĕ патĕнчи позицийĕсем çинче çирĕпленеççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен соединенисем ĕнер кăнтăр Францири, çурçĕр Италири тата Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Çавăн пекех тата тăшманăн кăнтăр Югославири тата Югославири çапăçусен районĕнче пĕр çĕре пуханнă çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Англи авиацийĕ Германие тапăнни

ШТУТГАРТПА БЕРЛИН ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Пуринчен те вăйлăрах вĕсем Штутгарт хулине атакăланă.

«Москито» йышши самолетсем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Штутгартпа Берлина тапăннă. Унсăр пуçне тата нимĕçсен самолет-снарячĕсем вĕçсе улăхмалли Çурçĕр Францири базисене тапăннă.

НИМĔÇСЕН ГЕНЕРАЛ-ФЕЛЬДМАРШАЛĔ БУШ ХĂЙНЕ ХĂЙ ВĔЛЕРНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАР

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек хыпар илнĕ: хĕвелтухăç фронтĕнчи центральнăй участокри нимĕç çарĕсен командующийĕ пулнă генерал-фельдмаршал Буш хăйне хăй вĕлернĕ.

КĔСКЕН

● Мексико хулинче совет архитектурин выставки уçăлнă. Выставкăра авалхи вырăс архитектурин памятникĕсене тата хальхи совет зодчествин фотографийĕсене кăтартаççĕ. Çавăн пекех тата гитлерла вăрă-хурахсем хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕнче истори тĕлĕшпе питĕ паха пулса тăракан япаласене ирсĕррĕн ишĕлтерсе пĕтернине кăтартакан фото-документсем те пур.

* Июлĕн 12-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Италири По шывĕ çинчи пур 22 кĕпере те ишсе антарнă е сиенленĕ. Çакна пула Итали фронтĕнчи нимĕç çарĕсене кирлĕ хатĕрсем тăратасси питĕ йывăрланса кайнă.

ПĔРЛЕШÿЛЛĔ НАЦИСЕН ВАЛЮТĂПА ФИНАНС КОНФЕРЕНЦИЙĔ ХУПĂННИ

БРЕТТОН ВУДС, июлĕн 23-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Пĕрлешÿллĕ нацисен валютăпа финанс конференцийĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ. Юлашки ларура США-н финанс министрĕ Моргентау сăмах тухса каланă. Конференцире пур решенисене те пурте пĕр кăмăллă пулса йышăнчĕç, тенĕ вăл. Унтан Моргентау Рузвельтран илнĕ послание вуласа панă.

Рузвельт çав посланире конференци делегачĕсене вĕсем хăйсен йывăр ĕçне ăнăçлă пĕтернĕ май саламланă. Унтан вăл çапла каланă: «Эсир çĕр çинче нумай вăхăта пыракан мирлĕ те хăрушсăрлăхлă пурнăç тăвас тĕлĕшпе икĕ çĕнĕ çирĕп никĕс хыврăр, эсир пĕрлешÿллĕ нацисем мирлĕ пурнăç вăхăтĕнчи плансене тăвас тĕлĕшпе те вăрçă вăрçас тĕлĕшри пекех пĕрле ĕçлеме пултарнине кăтартрăр», — тенĕ.

ТУРЦИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СУТУ-ИЛÿ ĔÇĔСЕМ

КАИР, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Кунти политика ушкăнĕсенче Турципе Германи хушшинчи суту-илÿ ĕçĕсем 1943 çулхипе пĕр шаях пулса пынине палăртаççĕ. Турци правительстви кăçал Германие таварсем 1943 çулхинчен 50 процент сахалтарах ямалла тăватпăр тесе пĕлтернĕччĕ, анчах ку сăмахсем ĕçе кĕни курăнмасть. Ку çеç мар-ха. Турци Германипе суту-илÿ тăвасси çинчен çĕнĕ килĕшÿ тума хатĕрленет.

Турци меджлисĕ Германипе Турци хушшинчи суту-илÿ ĕçĕсем тĕлĕшпе тунă ĕлĕкхи килĕшĕве татах та икĕ уйăхлăха тăснă, унсăр пуçне, Турци Германие ямалли таварсене 14 миллион лирлăх ÿстерме решени йышăннă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех американецсен илемлĕ, темиçе сăрпа ÿкернĕ çĕнĕ фильмне

«Д Ж У Н Г Л И»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене кассăра ирхине 10 сехетрех сутма пуçлаççĕ.

Выльăх ĕрчетессишĕн яланах пикенсе ĕçлемелле

Пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи государство планне ăнăçлă тултарчĕç. Уйрăм районсем кăçал та выльăх-чĕрлĕх шутне тата унăн тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те тултарчĕç. 5 уйăх хушшинче çак районра мăйракаллă шултăра выльăхсен шутне 17,7 процент, сыснасен шутне — 3,3 процент тата сурăхсен шутне — 28,7 процент ÿстернĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса Çĕрпÿ районне куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав пама йышăнчĕç. Выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе çавăн пекех Чурачăк, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски тата ытти хăшпĕр районсем те чылай çитĕнÿсем турĕç. Çак çитĕнÿсене вĕсем выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе тунă.

Выльăхсен шутне малалла ÿстерсе пырас тесен, татах та пикенерех ĕçлеме тивет, уйрăмăнах халĕ выльăхсем валли апат хатĕрлес ĕçе мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле. Выльăх апачĕ хатĕрлесси — паянхи пысăк та ответлă ĕç. Выльăх апачĕ кирлĕ чухлĕ хатĕрлемесен, выльăхсене малалла ăнăçлăн ĕрчетсе пыма çук. Выльăх апачĕ — выльăх ĕрчетмелли никĕс пулса тăрать.

Выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрленинчен выльăхсен шутне, вĕсен тухăçлăхне ÿстерессi килет. Çавăнпа та выльăх апатне ытларах хатĕрлемелле. Республикăри нумай колхозсем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Утă çулса пухас, клевер, улăм, тымар-çимĕç, силос, милĕксем хатĕрлес тесе çине тăрса ĕçлерĕç, выльăх усрама кирлĕ çуртйĕрсене хатĕрлеççĕ. Малта пыракан колхозсем выльăхсем валли апат хатĕрлеме çуркуннеренех тытăнаççĕ. Чурачăк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кашни çулах çуркунне çарансене тасатать, лайăхлатас тĕлĕшпе нумай ĕç туса ирттерет. Вĕсем кăçал та çарансемпе выльăх кĕтмелли вырăнсене тĕрлĕ çÿп-çапран, йывăç тĕмĕсенчен, шултăра туналлă çумкурăкĕсенчен тасатнă. Мĕншĕн тесен вĕсене тасатсан çеç курăк пĕр тикĕс ÿсет тата çуласси çăмăлланать. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз тата Советски районри нумай колхозсем çарансемпе выльăх кĕтмелли вырăнсене яланах тасатса тăраççĕ. Çавна пула çак районсенчи колхозсем пысăк тухăçлă утă пухса илеççĕ, выльăх валли çителĕклĕ таран паха апат хатĕрлеççĕ.

Утă çулнă вăхăтра час-часах çумăрсем пулни кăçал çак ĕçе чылай чăрмантарчĕ. Анчах та ĕçе организацилеме пĕлнĕ колхозсем утă пухас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕç. Йĕпреç, Тăвай, Елчĕк тата ытти районсенчи колхозсем утă çулмалли плана ăнăçлăн тултарчĕç.

Анчах та уйрăм районсем утă çулас ĕçе тăсса пычĕç. Утă çулас тĕлĕшпе Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Чурачăк, Элĕк районĕсенчи колхозсем çителĕксĕр хăвăртлăхпа ĕçлерĕç. Элĕк районĕнчи «Красная Армия», Киров ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем утă çулас ĕçе начар туса пычĕç.

Тамбов облаçĕнчи Мичурински районри «Заветы Ильича» колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем кашни ферма çумĕнче участоксем тăвасси çинчен чĕнсе каланине пирĕн республикăри колхозсем пысăк кăмăлпа йышăнса илчĕç. Кашни ферма çумĕнчех кăçал выльăхсем валли тымар-çимĕç, çĕрулми тата курăксемпе тырăсем акрĕç. Халĕ ферма çумĕнчи участоксенчен çав выльăх апатне пухса илес тĕлĕшпе фермăсенче ĕçлекенсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, вĕсене çумкурăкĕсенчен тасатсах тăмалла. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозра, сăмахран, ферма çумĕнчи участок 21 гектар йышăнать. Кунта фермăра ĕçлекенсем участок çинчен çумкурăкĕсене тасатнă, 5 гектар çинчи çĕрулмине кăпкалатнă тата купаланă, 10 гектар çинчи тырăсене тислĕк шĕвекĕпе апатлантарнă. Вĕсем кашни гектартан 200 центнер çĕрулми, пысăк тухăçлă тымар-çимĕç тата тырпул пухса илес задача лартнă. Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем те ферма çумĕнчи участоксене 272 гектар акнă. Кунта та фермăсенче ĕçлекенсем çак участоксенчен пысăк тухăçлă тырпул, тымар-çимĕç пухса илес пирки ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çак районри «Ĕмĕт» колхоз ферма çумĕнчи участока вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акнă, вăхăтра çумланă, купаланă тата апат панă. Кунта 35 центнер вĕлтрен, 20 центнер арăмути пухса типĕтнĕ. Витаминлă утă 250 центнер хатĕрленĕ.

Выльăх апачĕн çирĕп базине тăвас ĕçре нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхне хатĕрлени пысăк вырăн йышăнать. Нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсем çитмен пирки уйрăм районсенче кăçал чылай йывăрлăхсем пулчĕç, апла пулсан та хăшпĕр районсем çак ыйту çине тивĕçлипе çаврăнса пăхмаççĕ-ха.

Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Чкаловски районсенче акнă курăксен лаптăкĕнчен вăрлăх участокĕсем уйăрас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Вăрлăх участокĕсене лайăх пăхса тасатса тăмалла, нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхне ытларах туса илме тăрăшмалла тата вăхăтра пухса илме хатĕрленмелле. Пухнă хыççăн кая хăвармасăр çапса шĕкĕлчемелле, кашни колхозăнах вăрлăх хăйне кирлĕ таран çеç мар, ытларах хатĕрлемелле. Вăрлăх участокĕсене уйĕç бригадисем çумне çирĕплетмелле, вĕсене вăхăтра çумламалла тата пухса илмелле.

Иртнĕ çулсенче чылай колхозсенче силоса хисеплемесчĕç. Халĕ ĕнтĕ силос выльăхшăн паха апат пулса тăнине пурте пĕлеççĕ. Чылай колхозсем çуркуннеренех силос хывма тытăнчĕç, шăтăксем алтма е киввисене юсаса тасатма тытăнчĕç. Халĕ силос хывас ĕç нумай районсенче пысăк ăнăçлăхпа пырать. Чурачăк, Сĕнтĕрвăрри тата ытти районсем силос хывмалли плана ытлашшипех тултарчĕç. Çĕрпÿ районĕнчи «Пионер» колхозăн план тăрăх 50 тонна силас хывмалла, унта 120 тонна хывнă. Çак паха ĕçе малалла та ăнăçлăн туса пыраççĕ. Муркаш районĕнчи «Авангард» колхоз та 85 тонна вырăнне 125 тонна силос хывнă. Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз 80 тонна вырăнне 100 тонна ытла хывнă. Силос хывас плана ирттерсе тултарнă колхозсен шучĕ пысăк.

Кăçал пирĕн колхозсем кашни сăвакан ĕне пуçне 30 центнер, пăру валли 4 центнер, кашни сысна ами пуçне 10 центнер силос хывмалла. Анчах та, калас пулать, уйрăм районсемпе колхоз руководителĕсем иртнĕ хĕлле пулнă йывăрлăхсене асра тытмаççĕ, çак вăхăта çитсе те выльăхсене валли апат хатĕрлес пирки кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Иртнĕ çул выльăх апачĕ çителĕксĕррине пула чылай колхозсенче выльăхсем нумай чакрĕç. Сăмахран, Первомайски район выльăх апачĕ çитмен пирки пысăк сиен курчĕ. Анчах та çак район силос хывмалли плана кăçал та тултармасть, нумай колхозсем вăрман ăшĕнче лараççĕ пулсан та, пĕр лав йывăç милĕкĕ, пĕр центнер вĕлтрен е арăмути те хатĕрлемен. Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе, уйрăмăнах силос хывассипе, Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Шăмăршă районĕсем те начар ĕçлеççĕ, вĕсем те силос сахал хывнă.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлесен, нумай тонна силос, вĕлтрен, арăмути тата хăй тĕллĕн ÿсекен курăксем хатĕрлĕç, выльăх апачĕн çирĕп базине туса хурассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕç.

Хĕрлĕ Çар вăрçă хирĕнче тĕлĕнмелле чаплă çитĕнÿсем тăвать, татăклă çĕнтерĕвĕн çутă та савăнăçлă кунĕсем çывăхараççĕ. Çак кунсене хăвăртрах çитерес тесен, Хĕрлĕ Çара аш-какай, сĕт-çу ытларах та ытларах парса тăмалла. Кашни колхозникпа колхозницăна çак чыслă тивĕçе пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме явăçтарар.

А. МИТРОФАНОВА,
ВКП(б) Обкомĕн выльăх-чĕрлĕх отделĕн заведующи заместителĕ.

Вăрнарти зооветтехникум 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум зоотехниксемпе ветеринарсем вĕрентсе хатĕрлет.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне, копине мар); б) ăçта, миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне); в) сывлăх çинчен калакан справка; г) çар службин тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла); д) виçĕ фотокарточка.

Вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе испытани тытмалла: вырăс чĕлхипе тата литературипе, математикăпа, конституципе.

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен отлично вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене те испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Техникумăн столовăй, общежити, библиотека, мунча, прачечнăй пур.

Адрес: п/о. Вурнары, Зооветтехникум.

Шупашкарти эрех заводне çакăн пек работниксем кирлĕ: лаборатори заведующийĕ (инженер-пищевик пулсан лайăхрах), слесарьсем, пар хуранĕн кочегарĕсем, кăмака тăвакан тата цехра ĕçлекенсем.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Вера Касьяновна **Касьянова** юлташ кăçалхи июлĕн 28-мĕшĕнче Çĕмĕрле хулинче вилни çинчен хуйхăрса пĕлтерет.

Редакци адресĕ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5, Дом печати. Телефонсем: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00284 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.